# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

32 (8500) № ✻ Юнкун, 2017 çулхи çу (май) уйăхĕн 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Çур аки – 2017

## Пĕр ĕмĕтпе – хиртен хире



***Паян хĕрӳ ĕçри ĕçчене ăнланма пулать. Çурхи акасухана яваплăха туйса хатĕрленнĕскер кĕске хушăрах 13100 гектар çинче çурхи уй-хир ĕçĕсем ирттерес тĕллевлĕ. Вăл шутран 9500 гектар – çуртрисем, 400 гектар – "иккĕмĕш çăкăр", 2000 гектар – пĕр çул ӳсекен курăксем, 1750 гектар – кукуруза, 105 гектар пахча çимĕç йышăнмалла.***

***Уйрăм хуçалăхсен ĕç планĕсене пăхсан пахча çимĕçĕн ытларах пайне А. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, КМК "Агро" тата "Герой" кооперативра акас-лартас шутлă. Çĕр улмин ытларах пайне (200 гектар) "Ударник" хуçалăх лартас ĕмĕтлĕ. 1750 гектар кукурузăран 1200 гектарне тырăлăх туса илме уйăраççĕ. Ку енĕпе кăçал "Ударник" кооперативпа (1000 гектар) "Бездна" чикĕллĕ яваплăхлă общество (200 гектар) ытларах ĕçлес тĕллевлĕ.***

Хĕвел ăшшипе, çурхи çил вăйĕпе юртан тасалнă уй-хир паян хресчене çурхи ака-сухана чĕнет. Малашлăхпа пурăнакана тăри юрри те çывăрма памасть. Çапла вара хресчен черетлĕ ака-сухана тухрĕ. Ăна тулли вăй-халпа кӳлĕнсе пысăк пахалăхлă, технологипе килĕшӳллĕ ирттересси – çĕр ĕçченĕн умри тĕллевĕ.

Уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса хресчен çур акине пур енлĕ хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Вăхăтра пурнăçланă ĕç кăна çур акире йĕркеллĕ ĕлкĕрсе пыма ирĕк парать. Çакна ăнланакан çĕр ĕçченĕ паха вăхăтпа туллин усă курма тăрăшать. Ĕçе çиччĕ виçсе хатĕрленни паян хире тухсан та мал ĕмĕтлĕ тăрăшать: уй-хир ĕçĕсен планĕпе маларах паллашнăскер кашни ĕç тĕлне пĕлет вăл. Хăйне шаннине вăхăтра пурнăçлассишĕн хĕвелпе тан хире тухса таврана кас сĕмĕ пусиччен трактор штурвалĕ умĕнче вăл.

Ĕнер, çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче, "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем çурхи уй-хир ĕçĕсене малалла тăсрĕç. Тăватă механизатор хăйсене шанса панă тракторсемпе кĕрхи культурăсене апатлантарса пĕтерессипе тăрăшрĕ. 34-мĕш çур акине хутшăнакан Владимир Филиппов **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** çĕртме сухи тунă пусăра нӳрĕк тытса хăварассипе ĕçлетчĕ.

– Çур акире вăхăтра нӳрĕк тытса хăварни – пулас тухăçăн тĕп никĕсĕ. Çавăнпа та ку ĕçе пурнăçлассине çĕр ĕçченĕ пысăк тимлĕх уйăрать. Эпир те çапла тăватпăр. Çĕртме пуссине тухиччен нумай çул ӳсекен курăксен анине сӳрелессипе тимлерĕм. 56 гектар çинчи ĕçе кĕске вăхăтра вĕçлерĕм, – кăшт канма чарăннă вăхăтра калаçа пачĕ Владимир Виссарионович.

Унăн сăмахĕсене Пилеш варĕнче (уй ячĕ) акма çĕр хатĕрлекен, пĕр вăхăтрах инженер ĕçне пурнăçлакан Вадим Васильев **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** малалла тăсрĕ.

– Çур акине вăхăтра ирттересси – паян кашни хресчен умĕнчи тĕллев. Эпир те ăна иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр. Тĕллевлĕ ĕçленине кура паян пĕр çемьери пек тăван уй-хире черетлĕ çур акине тухрăмăр. Ăна паха ирттерме хуçалăхра ака кондицине тивĕçтерекен вăрлăх, сĕрмелли-çунтармалли материал çителĕклĕ. Ял хуçалăх техникине те ĕçе тухма юсаса çитертĕмĕр. Ĕç условийĕсем кашниншĕнех паллă. Çавăнпа та тухăçлă ĕçлеме кăмăл пысăк, – терĕ нумай çул хуçалăхра инженерта ĕçлекен Вадим Владимирович.

"Оринино" хуçалăхран "Герой" кооператива çитрĕмĕр. Кунта апатлантарнă тата нӳрĕк тытса хăварнă уй-хирсем пĕр тикĕс выртаççĕ. "Свобода" пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та çур аки валли хатĕрлесе çитернĕ пусăсем кашмашсемпе çатракассисем алă усмасăр ĕçлеме çирĕплетеççĕ. Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра та паян иртен пуçласа сĕм çĕрлечченех хирте 5 "хурçă ут" канма пĕлмесĕр ĕçлет.

– Ĕç вăйĕ çитет. Нумай çул ӳсекен курăксен пуссисенче нӳрĕк тытса хăвартăмăр. Кĕске вăхăтра 400 гектар ытла лаптăк çинче кĕрхи тулă пуссине апатлантарса нӳрĕк тытрăмăр. Паян хирте 5 трактор ĕçлет: 4-шĕ çывăх вăхăтрах нӳрĕк тытассине вĕçлесе пырать, Т-150 трактор вара акма çĕр хатĕрлет, – терĕ кĕске калаçура кооператив ертӳçи В. Семенов.



Хуçалăхсенче тулли хăватпа ĕçлеме условисем çителĕклĕ. Апла пулсан çур аки ĕçĕсене кĕске вăхăтра вĕçлесси те – пурнăçланмалли тĕллев.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Республикăра

## ВСМ тăвассин ыйтăвĕпе

Пуйăссем пысăк хăвăртлăхпа çӳремелли "Мускав – Хусан" магистраль пирĕн республика, вăл шутра пирĕн район тăрăх та иртессине пĕлетпĕр. Трасса вăрăмăшĕ республикипе 115 километрпа, вăл шутра пирĕн район территорийĕнче 22,15 километрпа танлашать. Магистрале 2018 çулхи виççĕмĕш кварталта тума тытăнма палăртаççĕ.

Çак кунсенче "РЖД" ОАО пĕрремĕш вице-президенчĕ А. Мишарин, республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев тата ытти яваплă ĕçчен хутшăннипе станци пулмалли вырăнта – Шупашкар районĕнчи Çырмапуç ял тăрăхĕн территорийĕнче вырăна тухса канашлу ирттернĕ. Магистрале тата станци комплексне тăвассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă çĕре район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та хутшăннă.

Районта: ĕнер, паян, ыран

## "Хăрушлăхсăр кустăрма"

Шкул ачисем çулсем çинче инкеке лекессине чакарасси хальхи вăхăтра пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри шутланать. Муркаш шкулĕ вара республикăн "Пĕрле эпир çул çинчи хăрушсăрлăхшăн" проектне пурнăçа кĕртессипе пилот площадки пулса тăрать. Çавна май Муркаш шкулĕнче республика конкурсĕн районти "Хăрушлăхсăр кустăрма" тапхăрне ирттернĕ. Ăна йĕркелекенĕсем – ГИБДД районти пайĕ, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕ. Конкурса çул-йĕр инспекторĕсен 14 команди хутшăннă. Малти призлă вырăнсене Муркаш, Шурча тата Калайкасси шкулĕсен командисем йышăннă.

## Символсен кунĕ ячĕпе

Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунне туса хунăранпа кăçал 25 çул çитрĕ. Çавна халалласа районти Культура çуртĕнче выставка йĕркеленĕ. Выставкăна хăйсен ĕçĕсене тăратнисем хушшинче районти вĕренӳ организацийĕнче вĕренекенсем те, культура учрежденийĕсенче ĕçлекенсем те пур. Чăваш Республикин патшалăх ялавĕ, гербĕ тата гимнĕ – республикăра пурăнакан мĕнпур граждана пĕрлештерсе тата пĕтĕçтерсе тăракан символсем. Çакна выставкăри ĕçсене анлăн çутатнă.

## Юбилей номерĕ

Паян район тантăшĕн – районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçатăн 8500-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Унăн пĕрремĕш номерĕ 1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнче "Колхозник сасси" ятпа кун çути курнă. Муркаш район хаçачĕн пĕрремĕш редакторĕ Куславкка район çынни Ф.И. Малышкин пулнă. Малтанхи çулсенче хаçата редакторпа яваплă секретарь туса хатĕрленĕ. Вăл ун чухне эрнере пĕр хут 1200 экземплярпа пичетленнĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн хисеплĕ ĕçтешĕмĕр – Ильинкăри вăтам шкул директорĕ **Надежда Лукинична ИВАНОВА** апрелĕн 30-мĕшĕнче сумлă юбилейне паллă турĕ. Çак ятпа эпир ăна чун-чĕрери чи ăшă туйăмпа саламлатпăр. Иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх, чăтăмлăх тата савăнăçлă кунсем сунатпăр. Ĕçре çитĕнӳсем пулчăр, çемьере – килĕшӳпе ăнланулăх. Паянхи пекех вăр-вăр, илемлĕ, чунпа çамрăк пулăр, хăвăра упрăр.

**Саламлаканĕ: Ильинка шкул коллективĕ.**



Пирĕн юратнă çыннăмăра – Катькас ялĕнче пурăнакан **Юрий Иванович ЕФРЕМОВА** 75 çулхи сумлă юбилей ячĕпе пур кăмăлтан саламлатпăр. Ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр, юман пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр сана.

Чун-чĕререн юратса, хакласа, хисеплесе эпир тав сăмахĕ калатпăр. Хăвна упрама, чунпа ялан çамрăк пулма сĕнетпĕр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăтăлăхлачисем тата тăванĕсем.**

Юнкăри С. Михайлов ячĕпе хисепленсе тăракан пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул химии учителĕнче ĕçлекен хаклă ĕçтешĕмĕре – **Ирина Григорьевна ИЛЛАРИОНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлать.

Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хал, вăрăм кунçул, телей сунать. Ачасене вĕрентес, воспитани парас ĕçре тата та пысăк çитĕнӳсем тумалла пултăр.

**Шкул коллективĕ.**



Орининти вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул техслужащире ĕçлекен **Юлия Николаевна МАКСИМОВĂНА** илемлĕ юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлать. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телейпе савăнăç сунать. Эсир шкулта тирпейлĕхпе тасалăхшăн нумай тăрăшатăр, хăвăр ĕçченлĕхпе палăрса тăратăр. Тавах сире ырă кăмăлушăн, пирĕнпе пĕрле тăрăшнăшăн. Сирĕн çемьере яланах килĕшӳ хуçалантăр, ачусемпе, мăнукусемпе, сывăх тăванусемпе пĕрле ĕмĕр вĕçне çитиччен килĕштерсе пурăнмалла пултăр. Мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса пытăр, хуйхă-суйхă яланах аякките иртсе кайтăр. Эпир сире чунтан хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕ: Орининти вăтам шкул коллективĕ.**



Савнă мăшăрăма, юратнă аттене, таварат та ырă кăмăллă кӳрше – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Вячеслав Витальевич МИХАЛКИНА** майăн 1-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кӳршĕри Самушковсен çемйи.**

## Пирĕн календарь

# Берлина илнĕ

Майăн 2-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çав кун 1945 çулта Жуков маршал ертсе пыракан 1-мĕш Белорусси фрончĕн тата Конев маршал ертсе пыракан 1-мĕш Украина фрончĕн çарĕсем Берлина пĕтĕмĕшпех алла илнĕ. Питĕ çивĕч хирĕç тăнă хыççăн фашистла "рейхăн" тĕп хулине парăнтарнă. 15 сехет тĕлне тăшман хирĕç тăма пăрахнă. Берлин гарнизонĕн юлашки çар çыннисем тыткăна парăннă.

## Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# Тивĕçлĕ пулăшу илме майсем пур

Пирĕн пата **Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчен Петр Воробьев** çырупа тухнăччĕ. Автор çырура Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ район больницинче тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ илме майсем çителĕксĕрри, çынсен ытларах чухне район больницине Муркаша кайса çӳреме тивни, кунта вара ялан тенĕ пекех çын нумай пулнипе черетре тăрса вăхăта чылай çухатма тивни пирки ыйтусем хускатнăччĕ.

Ку çырупа **район тĕп больницин тĕп врачне Николай Кожевникова** паллаштарма тиврĕ. Акă мĕнле хурав ярса пачĕ Николай Алексеевич редакцие:

"2-мĕш номерлĕ район больницинче медицина пулăшăвĕпе 2017 çулхи январĕн 12-мĕшĕнчи ЛО-21-01-001595 номерлĕ лицензие тĕпе хурса тивĕçтерессĕ. Çак специальноçсемпе пулăшу пама пăхнă.

Малтанхи (первичный), вăл шутра врач умĕнхи (доврачебный), врач тата ятарлă, медицина тата санитари пулăшăвĕ панă чухне çак ĕçсене (услугăсене) пурнăçлассĕ:

амбулатори условийĕсенче **врач умĕнхи малтанхи медицинăпа санитари пулăшăвĕ панă чухне**: акушер ĕçĕ енĕпе, вакцинаци енĕпе (профилактика прививкисем кĕрессĕ), лабораторие диагностики енĕпе, пĕтĕмĕшле практика тата рентгенологи енĕпе, сестра ĕçĕ тĕлĕшпе, педиатринчи сестра ĕçĕ тĕлĕшпе, ортопеди стоматологийĕ енĕпе;

амбулатори условийĕсенче **малтанхи медицинăпа санитари врач пулăшăвĕ** панă чухне: пĕтĕмĕшле врач практики (çемье медицини) тĕлĕшпе, педиатри енĕпе;

амбулатори условийĕсенче малтанхи ятарлă медицинăпа санитари пулăшăвĕ панă чухне: акушерствăпа гинекологи енĕпе (репродуктивлă хушма технологисемпе усă курасси кĕмест), клиника лабораторие диагностики енĕпе, неврологипе офтальмологи тата рентгенологи енĕпе, пĕтĕмĕшле практика стоматологийĕ енĕпе, ортопедипе хирурги стоматологийĕсем енĕпе, травматологипе ортопеди тата хирурги енĕпе.

Медосмотрсем, медицина тĕрĕслевĕсемпе экспертизисене ирттернĕ чухне çак ĕçсене пурнăçлассĕ:

**медосмотр** ирттернĕ чухне: профилактика медицина тĕрĕслевĕсем енĕпе;

**медицина экспертизи** ирттернĕ чухне: вăхăтлăх ĕçлеме пултарайманнин экспертизи енĕпе.

Медицина пулăшăвĕпе медицина пулăшăвĕ памалли йĕркесене тата стандартсене тĕпе хурса тивĕçтерессĕ.

2016 çулта 2-мĕш номерлĕ район больници валли ЭКГ аппарачĕсене, медицина тарасисене, фармацевтика холодильникне, облучательрециркуляторсене, медицина сĕтел-пукапне, юн пусăмне виçмелли тонометрсене туяннă, дефибрилляторпа тивĕçтернĕ.

2015 – 2016 çулсенче больницăн пурлăхпа техника базине çирĕплетме çак ĕçсене туса ирттернĕ: стационар корпусĕнче кулленхи юсав ĕçĕсем пурнăçланă, инфекци уйрăмне тата хуçалăх корпусне юсанă, ăшă парса тăмалли системăна юсанă.

2-мĕш номерлĕ район больницинче васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмĕ ĕçлет, чĕннĕ вырăнсене 2 фельдшер тухса çӳрет.

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакансем 2-мĕш номерлĕ район больницинче яланах пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илме пултарассĕ".

Автора хурав тивĕçтерчĕ-и е çук – ăна калама пултараймастăп. Медицина терминологине ку енĕпе пĕлӳ илмен çыннăн ăнланма йывăртарах пулĕ. Ара, врач эмел туянма панă рецепта та хăш чухне мĕнле чĕлхепе çырнине тӳрех тавçăрса илейместпĕр те. Вулакан çырăвĕнче вара çынсен медицина пулăшăвĕ илме нумай чухне район центрне Муркаша кайса çӳреме тивни пирки те калани пурччĕ. Çавăнпа та эпĕ **2-мĕш номерлĕ район больницин заведующийĕпе Юрий Трофимовпа** та çыхăнса пăхма кăмăл турăм. Ăна пĕр ыйту çине кăна хурав пама ыйтрăм: "Калăпăр, çыннăн автомашинăпа çӳреме ирĕк паракан удостоверение улăштарма вăхăт çитнĕ е диспансеризаци тĕрĕслевĕ витĕр тухмалла. Кун пек справкăна Мăн Сĕнтĕр больницинче илме пулать-и-ха, больницăра диспансеризаци тĕрĕслевне ирттерме май пур-и?"

Юрий Михайлович çавна пĕлтерме кăмăл турĕ. Удостоверени валли медицина справки илес пулсан, наркологпа психиатрсăр пуçне ытти специалистсем патĕнче сывлăха тĕрĕслеттерме май пур. Сăмах май, психиатр штатне Мăн Сĕнтĕр больници валли кăна мар, район валли те пăхса хуман. Вăл Етĕрнери районсем хушшинчи психиатри больницин штатĕнче шутланать.

Çынсен диспансеризацин пĕрремĕш тапхăрне тухассипе те проблемăллă мар. Малтанхи тапхăрта ку е вăл чире тупса палăртсан кăна вара тĕплĕрех медицина тĕпчевне район тĕп больницине каймалла пулать.

Кадрсем, штатсем тĕлĕшпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ.

**"Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав" телефонĕсене аса илтеретĕп: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

## Аслă Çĕнтерӳ кунĕ умĕн

# Тимĕрçĕ ачи

Мирлĕ пурнăçпа çар тивĕçĕ, вăрçăпа фронт линийĕ, вĕççĕр-хĕрсĕр çухатупа ырă шанăç кӳрекен юрату – çаксем хыçĕнче пурнăç илемĕпе санăн кун-çулна туллин хак пани тăрать. Халĕ калани – йăлтах Тăван çĕршывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнисен пурнăçĕнчен. Юлашки çулсенче çав хаяр вăрçăна тӳссе ирттернĕ, фашизм аталанăвне пурнăçа шеллемесĕр пӳлнĕ салтаксене çĕршыв шайĕнче тивĕçлипе чысласси палăрмаллах ӳсрĕ. Вăл çулсенче фронтовиксен ашшĕ-амăшĕсемпе мăшăрĕсем тата ачисем ывăлĕсемпе хĕрĕсене, упăшкисене тата ашшĕсене çапăçу хирĕнчен кунсерен кĕтнĕ. Фронтран мирлĕ пурнăçа ура ярса пуснă Çĕнтерӳçĕ-салтаксене те пĕрремĕш кунранах пысăк хисеп тунă. Çамрăксен тĕллевĕнче аслисем тунă Çĕнтерĕве малалла аталантарасси тĕп вырăна тухнă. Çавăнпа та фронтра мирлĕ пурнăçшăн çапăçусем кĕрленĕ çулсенче кун çути курнисем тата вăрçă хыççăнхи çулсенче çуралнă арçын ачасем çар çыннин пурнăçне суйлани никамшăн та тĕлĕнтермĕш пулман: вăл вăхăтра салтакăн чыс-хисепĕ çӳллĕ шайра тăнă. Иртнĕ кунсенче эпĕ çакнашкал чыславăн пĕр тĕслĕхĕпе тĕл пултăм...

Çатракассинчи вăтам шкулти çарпа ĕç мухтавĕн музейĕнче эпĕ пырса кĕнĕ чух петлицăсем çинче танк эмблемиллĕ подполковник васкамасăр Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă ентешсен сăн ӳкерчĕкĕсене пăхатчĕ. Аслăрах ăрури ĕç паттăрĕсем хушшинче те палланисем пулнăран хăшĕсем патĕнче чарăнса тăрсах вĕсен ачи-пăчисем, тăванĕсем епле пурăннипе кăсăкланатчĕ. Ку вăл Хусантан тăван яла курма килнĕ 70 çулхи Георгий Сапожников **(сăн ӳкерчĕкре)** пулчĕ.

– Сăн ӳкерчĕксене пăхатăп та тăван ял çыннисемпе тĕл пулнăнах туйăнать. Кунта фронтран таврăнайман тăвансем, йывăр вăхăтра ĕçпе палăрнисем, тĕрлĕ çулта тăван ен аталанăвне пысăк тӳпе хывнисем, аслă ăрусен ĕçне паян малалла тăсакансем пур. Шкулта вĕсене упракан кĕтес пулни, çав ырă тĕслĕхсемпе учительсем çамрăк ăрăва воспитани пани пысăк чыса тивĕç, – васкамасăр калаçать Георгий Варфоломеевич.

– Хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ, ачаллах лаша çине утланса çӳренĕ, çĕр ĕçĕпе çывăх тăнă çамрăкăн танкист пуласси ăçтан пуçланнă? – калаçăва пуçласа ыйту патăм çĕнĕ пĕлĕшĕме.

Танкист пичче музейри сĕтел хушшине ларса калаçăва инçетрен пуçарчĕ. Итлетĕп те пурнăçăн кашни çавăрмакĕ ăна анлă пурнăç çулĕ çине кăларнă çĕрте пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Тимĕрçĕ ашшĕпе уй-хир ĕçченĕ пулнă амăшĕ çемьере ултă ача ӳстернĕ. Сывлăх тĕлĕшĕнчен çирĕп пулнă Георгий кашни çулах Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче фронтовиксем çине ăмсанса пăхнă. Шăпах вĕсене чысланă самантсенче арçын ача шухăшĕнче çар çынни пулас ĕмĕт тĕвĕленнĕ те. Кунпа пĕрлех кĕнеке вулама юратнăскерăн асĕнче Н. Островскийăн "Хурçă çапла хĕрнĕ" романти çак сăмахсем чĕрене çывăх вырнаçнă: "Атте-анне ĕнси çинче ларас мар тесен хăвăн укçа ĕçлесе илме вĕренмелле". Ку йĕркесене икĕ хĕр ашшĕ, куказçи-танкист паян та лайăх астунăран вĕсем уншăн хăй вăхăтĕнче епле пĕлтерĕшлĕ пулнине те ăнланма пулать.

Пуррипе çуккине сыпăнтарса пырсах ĕçрен катара тăман Георгий Çатракассинчи шкулта 8 çул вĕреннĕ хыççăн Муркашри вăтам шкултан алла аттестат илсе тухать. Хыççăн çамрăклах тĕвĕленнĕ ĕмĕте пурнăçа кĕртсе 1966 çулта Хусанти танк командирĕсем хатĕрлекен аслă çар училищине вĕренме кĕрет. Çакăн хыççăн унăн çар форми çинче танк эмблемисем вырăн тупассĕ.

Çар училищине питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтернĕ лейтенанта лайăххисен шучĕпе Германире тăнă çар чаçне разведка взвочĕн командирĕ пулма яраççĕ. Чĕрĕк ĕмĕр каялла пирĕн çĕршыва таптанă, çĕмĕрнĕ, çунтарнă, халĕ мирлĕ пурнăçпа пурăнакан "фрицсен" кусĕсемпе пĕрре мар тĕл пулнă вăл. Анчах вĕсен хистевĕсене парăнман, хăйне пăхăнса тăракан взводра та яланах йĕрке тытнă.

Лайăх офицера аслă командирсем асăрхаççĕ. Ăна хамăр çĕршыври Новочеркасск хулинчи уйрăм разведка батальонĕн разведротине ертсе пыма шанаççĕ. Шăпах çак вăхăтра Китайпа Вьетнам хушшинчи хутшăнусем япăхнăран пирĕн танкистсене çĕршыв интересĕсене хӳтĕлеме Монголине куçараççĕ. Кунта Георгий Варфоломеевич полк разведкин пуçлăхĕ пулса службăна тăсать. Çĕнĕ ĕç вырăнĕ мал ĕмĕтлĕ офицера М. Фрунзе ячĕллĕ çар академине вĕренме кĕме çул уçать. 1979 – 1982 çулсенче академире пĕлӳ пухнă офицера Кăркăстанра вырнаçнă дивизин разведка ĕçне йĕркелесе пыма шанаççĕ.

Ĕçе лайăх пĕлекен, яваплăха туякан çар çынни пĕр вырăнта лараймасть. Çак вăхăтра пирĕн çарсем Афганистан çĕршывĕнче интернационаллă тивĕçе пурнăçланăран пысăк опытлă офицера Афганистан армийĕнчи дивизи разведкин пуçлăхĕн пулăшаканĕ пулма



хушаççĕ. Хăйне пăхăнакансемпе пĕрре мар çар çапăçăвĕсене хутшăннă, офицер-юлташсене, хăйне пăхăннă салтаксене çухатма тивнĕ пирĕн ентеш çĕршыв хăй умне лартнă приказа туллин пурнăçланă. Çавăншăн унăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ вырăн тупнă.

Приказ мĕнне ăнланакан, çухату епле йывăррине хăй çинче туйса курнă офицера Афганистанти çар операцийĕ хыççăн Хусанти танк училищине çамрăк курсантсене вĕрентме яраççĕ. Унтанах вăл тивĕçлĕ канăва кайнă.

Раççей офицерĕн пурнăç çулĕпе паллашса тухнă май унăн çемье кун-çулĕпе те интереслентĕм.

– Çар училищинчен вĕренсе тухсан 1970 çулта çемье çавăртăм та мăшăрăмпа ачасем яланах юнашар пулчĕç. Афганистанта та вĕсем пĕрле пулни пурнăçа хаклама вĕрентетчĕ: хамăнне те, хама пăхăнса тăракансене те. Çавăнпа та çар пурнăçĕн карьеринче мăшăрăмăн тӳпи пысăк тесе шутлатăп, ăна тав тăватăп, – терĕ çар ĕç ветеранĕ ентешĕсене тата районта пурăнакансене çывхаракан Çĕнтерӳ кунĕпе саламласа.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


# ОТКРЫЛСЯ НОВЫЙ
## МЕБЕЛЬНЫЙ САЛОН

ФАНТ МЕБЕЛЬ

**БОЛЬШОЙ ВЫБОР**
**МЕБЕЛИ ПО ЦЕНАМ ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ**

**Тел.: 8-906-131-27-64.**

**Ждем Вас!**
**Адрес: с. Моргауши, на территории рынка, магазин «Парус».**

**Мебельная фабрика «ФАНТ МЕБЕЛЬ» г. Волжск**


**Продаю отруби дешево с доставкой. Тел.: 8-987-663-42-00. 13-20.**

* * *

**Отделка домов сайдингом. Монтаж кровли. Быстро, качественно, недорого.**
**Тел.: 8-961-345-78-02. 7-10.**

* * *

**Профнастил, труба, профили, металлический штакетник (производство), сетка-рабица. Доставка.**
**Тел.: 8-937-393-73-63. 8-10.**

* * *

**ВНИМАНИЕ! КАЖДЫЙ 10-Й ШТАКЕТНИК – В ПОДАРОК!!!** Производим и продаем штакетник металлический для забора, узоры на забор и другие комплектующие. 7 форм штакетника на выбор, любой цвет и размер! К вашим услугам – бригада лучших установщиков. **Наш опыт – гарантия качества. Свое производство – низкие цены! Тел.: 8-903-064-50-09, 8-927-864-50-09. Дима. 5-5.**

* * *

**Доставка. Гравмасса, Песок, Щебень, Керамзит. НЕДОРОГО. Тел.: 8-906-380-12-36. 3-10.**

* * *

**БУРЕНИЕ колодцев, скважин, канализаций. Тел.: 21-31-11. 5-10.**

* * *

**Продаю комнату в СЗР г. Чебоксары, пл. 19,2 м². Евроремонт. Тел.: 8-937-016-98-18.**

* * *

**Октябрь уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-917-678-91-70.**

**Организация продает щебень, гравмассу (ОПГС), песок речной. Возможна доставка. Тел.: (8352) 574281, 573383, 89033583623. 2-8.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр. Хакĕ каласса таталнă тăрăх.**
**Тел.: 8-905-341-69-25. 2-3.**

* * *

**Продаю черно-пеструю дойную корову. Тел.: 8-937-375-41-74, 8-927-665-58-95.**

* * *

**Тюк тăвакан пресс (Польша) сутатăп. Тел.: 8-903-357-73-51.**

* * *

**Декабрь уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă ĕне тата çамрăк автансем сутатăп.**
**Тел.: 8-987-129-78-74. 1-2.**

* * *

**Большесундырскому райпо на постоянную работу требуется электромонтер с 3 группой допуска. Тел.: 69-1-79, 69-5-46.**

### Тав сăмахĕ

Муркашри васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмĕнчи Н. Артемьева врача, А. Ермолаевпа А. Сергеев фельдшерсене мана йывăр вăхăтра çăлса хăварнăшăн пуç тайса тав сăмахĕ калатăп. Чăнах та эсир чи пысăк хисепе тивĕçлĕ. Пархатарлă ĕçшĕн Турри сире нумай çул усратăр. Çирĕп сывлăхлă пулăр, ĕçĕр ăнса пытăр. Çавăн пекех сире Майăн 1-мĕшĕпе тата çывхарса килекен Çĕнтерӳ кунĕпе саламлатăп. Тепĕр хут тав тăватăп.

**Никитина.**

Муркаш ялĕ.

**Уважаемые ветераны ГСВГ!**

**Приглашаем вас 9 мая 2017 года к 9.00 часам в РВК для празднования Дня Победы. Поздравляю вас с наступающим праздником 9 МАЯ.**

Руководитель Ассоциации ГСВГ по Моргаушскому району Г. Ефимов.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиками проекта межевания являются: Корпусов Владимир Николаевич, проживающий по адресу: Россия, Республика Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Снежная, д. 11, кв. 2.**

**Корпусова Валентина Ивановна, проживающая по адресу: Россия, Республика Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Снежная, д. 11, кв. 2.**

**Корпусова Нина Федоровна, проживающая по адресу: Россия, Республика Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тябакасы, ул. Полевая, д. 52.**

**Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail: arshin21@yandex.ru.**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, дом 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу:**

**1) 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина дом 41/5(ООО Аршин)**

**2) Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д.37(филиал ФГБУ "ФКП Росреестр").**

**3) Управление Росреестра по Чувашской Республике по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом 56.**

**Продаю ГРАВМАССУ, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, КЕРАМЗИТ. Доставка. Тел.: 8-905-199-69-33. 2-44.**

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; блоки, кирпич, цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел.: 21-49-49, 8-903-346-40-58. 6-10.**

**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 25-42.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ.**
**Тел.: 8-927-667-40-92. 31-47.**

КОРПУСНАЯ МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ от ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
Т. 8-927-847-50-77
Т. 8-927-859-21-60

УЛЬЯНОВСКАЯ МЯГКАЯ МЕБЕЛЬ
8-927-849-77-88

ДВЕРИ И ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
8-953-010-46-42

САНТЕХНИКА
8-917-668-12-87

АРЕНДА ПОМЕЩЕНИЙ
8-927-859-21-60

**3-10.**




У НАС МОЖНО КУПИТЬ В КРЕДИТ!

ВЕСЬ МАЙ СКИДКИ!!!
-5% -15% -30%

ЖДЕМ ВАС ПО АДРЕСУ: с.МОРГАУШИ, ул. ЧАПАЕВА 44М (НАПРОТИВ БОЛЬНИЦЫ)

**Керамзитобетонные блоки пропаренные, кирпичи – большой выбор, цемент, гравмасса, щебень, услуги манипулятора. Тел.: 8-960-307-41-78. 2-10.**

Муркашри тĕп больница коллективĕ Турайри больницăра ĕçленĕ сывлăх сыхлав ĕçĕн ветеранĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ

**Георгий Тимофеевич**
**БЫЧКОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Отдел культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района и райком профсоюза работников культуры Моргаушского района выражают глубокое соболезнование Семеновой О. А., заведующей Кашмашской сельской библиотекой филиала МБУК «ЦБС» Моргаушского района ЧР, ее родным и близким по поводу кончины отца

**ЩУКИНА**
**Алексея Варсанофьевича.**

### Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| День недели | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | +14 | +19 | +17 | +9 | +7 | +11 | +11 | +6 | +2 | +8 | +9 | +6 | +5 | +8 | +9 | +6 |
| Давление, мм рт. ст. | 746 | 746 | 747 | 749 | 750 | 751 | 751 | 752 | 752 | 751 | 748 | 745 | 740 | 735 | 732 | 733 |
| Ветер: скорость, м/с | 5 | 6 | 6 | 2 | 4 | 6 | 5 | 4 | 4 | 7 | 6 | 4 | 6 | 8 | 8 | 4 |
| порывы, м/с | 9 | 9 | 12 | 5 | | 11 | 11 | 9 | | 12 | 12 | 7 | 10 | 13 | 14 | 8 |
| направление | Ю | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С | С-З | С-З | З | З | З | З | З | С-З |
| Влажность, % | 57 | 57 | 39 | 50 | 49 | 38 | 25 | 35 | 52 | 29 | 25 | 41 | 66 | 76 | 75 | 62 |
| Солнце: восход заход | | 04:02 | 19:36 | | | 04:00 | 19:38 | | | 03:58 | 19:40 | | | 03:56 | 19:42 | |
| Луна: восход заход | | 10:46 | 01:38 | | | 12:00 | 02:09 | | | 13:13 | 02:34 | | | 14:25 | 02:56 | |

**Продаю: гравмассу (ОПГС); щебень гранитный, известковый, шлаковый; керамзит; песок; бетон. Доставка. Недорого. Тел.: 7-927-668-7 -15. 2-13.**

* * *

**Продаю теплицы. Дешево. Тел.: 8-960-307-16-06. 3-6.**

**На предприятие в с. Чемеево на постоянную работу требуются рабочие. Официальное трудоустройство, заработная плата сдельная, достойная, график – день через день. Перевозка к месту работы и обратно на служебном транспорте по маршруту Чемеево – Нискасы, Чемеево – Тораево – Анаткасы. Тел.: 8937-371-22-34 с 8.00 – 17.00. 1-5.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ.**
**Доставка. Тел.: 8-903-389-94-76. 1-10.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р – реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Р.А. Макарова.
Пичете панă 02.05.2017 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4848.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.